26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
АПРЕЛЬ
27
ЫТЛАРИКУН
89(6326) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1943 ÇУЛТИ МАЙĂН 1-МĔШĔ ЯЧĔПЕ ЦК ВКП(б) ЧЕНСЕ КАЛАНИСЕМ

1. Сывă пултăр Майăн 1-мĕшĕ—ĕççыннисен кĕрешӳри вăйĕсене пăхса тухмалли кун! Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем, фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме пĕрлешĕр!

2. Халăхсем хушшинчи мирлĕ пурнăça пăснă, çĕршер миллион ĕççыннисене вăрçă вутне кĕртсе янă гитлерла империалистсем—вăрă-хурахсем тĕп пулччăр!

3. Гитлерла империализма хирĕç кĕрешекен Европăри халăхсене салам! Европăри çĕршывсен патриочĕсем, хăвăра фашистла пусмăрлăхран ирĕке кăларассишĕн кĕрешме çĕкленĕр! Гитлерла тиранне сирпĕнтерсе антарăр!

4. Пусмăртри тăван славянсем! Гитлерла империалистсене—славян халăхĕсен чи тискер тăшманĕсене хирĕç халăхăн таса вăрçин çулăмне анлăнрах сарса ярăр! Сывă пултăр славян халăхĕсен кĕрешӳри пĕрлĕхĕ!

5. Этемлĕхĕн тăшманĕсене — фашистла нимĕç пусмăрçисене Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн боевой союзĕ çĕнтересси сывă пултăр!

6. Çурçĕр Африкăра Германипе Итали фашисчĕсене çĕмĕрсе пыракан Англипе Америкăн паттăр войскисем сывă пулччăр!

7. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç, хамăрăн тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн кĕрешекен пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар сывă пултăр!

8. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем! Нимĕçсен фашистла пусмăрĕ айĕнче хĕн куракан миллионшар совет çыннисем сире, ирĕке кăларакансене, кĕтеççĕ. Совет çĕрне ирĕке кăларассишĕн малалла, Хĕвеланăçнелле!

9. Пирĕн хуласемпе ялсене çаратса тата аркатса пĕтернĕшĕн, хĕрарăмсемпе ачасене асаплантарнăшăн, совет çыннисене вĕлернĕшĕн тата нимĕç чуралăхне хăваласа кайнăшăн нимĕçсен фашистла мерзавецĕсене пĕтерсе тăкса тавăрăр! Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!

10. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем! Çапăçури пултарулăха ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пырăр, хамăрăн çарти дисциплинăна, йĕркелĕхе тата организованноçа тĕреклетсе пырăр! Гитлерла мерзавецсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкиччен пыра-пыра çапăр!

11. Хĕрлĕ Çарăн командирĕсем! Вăрçă искусствине çине тăрса вĕренсе пырăр! Тĕрлĕ войскăсем пĕрпĕринпе çыхăнса вăрçас ĕçе лайăх вĕренсе çитĕр, хамăрăн паттăрлăхпа хăюлăха çапăçу хирĕнче войскăсене ертсе пыма пĕлнипе çыхăнтарса пырăр!

12. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем! Хĕллехи çапăçусем вăхăтĕнчи çитĕнӳсене çирĕплетсе тата ӳстерсе пырăр, кĕрешсе илнĕ çĕрĕн пĕр пусăмне те тăшмана ан парăр, фашистла нимĕç пусмăрçисене хирĕç татăклă çапăçăва хатĕрленĕр! Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

13. Хĕрлĕ çарăн пехотинецĕсем! Тăшман войскисене хăватлăн пырапыра çапăр, нимĕçсемпе вĕсен хӳрешкисене совет çĕрĕ çинчен хăваласа кăларăр!

Сывă пулччăр совет пехотинецĕсем!

14. Совет летчикĕсем—пирĕн тăван çĕршывăн соколĕсем! Сывлăшра пуç пулса тăрассине çĕнтерсе илĕр! Тăшмана сывлăшра та, çĕр çинче те, тинĕсре те пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе тăкăр!

Сывă пулччăр совет летчикĕсем!

15. Хĕрлĕ Çарăн танкисчĕсем! Пĕлсе наступлени тума тата тăшман войскисене йĕрлесе пыма вĕренĕр! Тăшмана аркатăр! Хамăрăн тăван çĕре нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларăр!

Сывă пулччăр совет танкисчĕсем тата моторизованнăй войскăсем!

16. Хĕрлĕ Çарăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем! Хăватлă вутхĕм тăкса, тăшманăн тĕреклетнĕ вырăнĕсене, узелĕсене тата хирĕç тăмалли пункчĕсене аркатăр! Противникăн салтакĕсемпе техникине пĕтерсе пырăр!

Сывă пулччăр совет артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем!

17. Хĕрлĕ Çарăн кавалерисчĕсем! Тăшман войскисене хăюллăн та татăклăн хăваласа пыма вĕренĕр, фашистла нимĕç ирсĕрĕсене пĕтерсе пырăр!

Сывă пултăр советăн утлă çарĕ!

18. Тинĕс-Çар Флочĕн краснофлотецĕсем, командирĕсемпе политработникĕсем! Тăшмана вăйлăнрах çапăр! Тăшманăн карапĕсемпе транспорчĕсене пĕтере-пĕтере тăкăр, гитлерла захватчиксене пĕр шеллемесĕр вĕлерсе пĕтерĕр!

Сывă пулччăр совет морякĕсем!

19. Хĕрлĕ Çарăн автоматчикĕсем! Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене — пирĕн Тăван çĕршывăн чи хаяр тăшманĕсене çирĕппĕнрех пыра-пыра çапăр! Вĕсене кăнтăрла та, çĕрле те канăç ан парăр!

Сывă пулччăр совет автоматчикĕсем!

20. Хĕрлĕ Çарăн разведчикĕсем! Нимĕçсен тылĕнче хăюллăн кĕрешĕр! Тăшманăн вăйĕсене тата вĕсем ăçта вырнаçса тăнине шыраса тупăр, унăн шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене пĕлсе тăрăр!

Сывă пулччăр советăн хăюллă разведчикĕсем!

21. Хĕрлĕ Çарăн связисчĕсем! Лайăх çыхăну тăшмана çĕнтермелли паха услови пулса тăнине асра тытăр! Хĕрлĕ Çарти çыхăну ĕçне пур майсемпе те лайăхлатса пырăр!

Сывă пулччăр совет связисчĕсем!

22. Инженерла-саперла войскăсен боецĕсем, командирĕсемпе политработникĕсем! Ылханлă тăшмана çĕмĕрсе тăкма пур майсемпе те пулăшса пырăр!

Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн инженерла-саперла чаçĕсем!

23. Сывă пулччăр пирĕн мухтавлă пограничниксем, совет çĕршывĕн чиккисене шанчăклăн хӳтĕлекенсем!

24. Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем! Врачсем, медсестрасем санитарсем! Эсир пурнăça шеллемесĕр ĕçленинчен советăн аманнă воинĕсен пурнăçĕ тата вĕсем строя таврăнасси килсе тăнине асра тытăр!

Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем!

25. Хĕрлĕ Çарăн гвардеецĕсем! Гвардин мухтавлă ялавĕсене чыслăн йăтса пырăр! Тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре паттăрлăхпа хăюллăхăн, дисциплинăллă тата çирĕп пулнин примерне кăтартăр!

Сывă пултăр совет Гвардийĕ!

26. Войскăсен тылĕнчи работниксем! Действующи Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене хĕçпăшалсем, боеприпассем тата продовольстви вăхăтра та тĕрĕс тĕкĕл парса тăрăр! Хĕрлĕ Çарăн çапăçу операцийĕсене пĕтĕм вăйпа пулăшса пырăр!

Сывă пулччăр войскăсен тылĕнчи работниксем!

27. Тăвансем! Вăхăтлăха нимĕçсен фашистла мерзавецĕсен пусмăрĕ айне лекнĕ вырăссем, украинецсем, белоруссем, молдавансем, литовецсем, латышсем, эстонецсем, карелсем! Пĕтĕм халăхăн партизанла движенийĕн çулăмне сарса ярăр! Нимĕç мерзавецĕсене пĕтерсе пырăр!

28. Совет партизанĕсемпе партизанкисем! Тăшманăн тылĕсене вăйлăнрах пыра-пыра çапăр, чугунçулсене, кĕперсене тата çыхăну хатĕрĕсене аркатăр, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтерсе пырăр! Нимĕçсене пирĕн ялсемпе хуласене çунтарса яма ан парăр! Совет çыннисене нимĕç чуралăхне хăваласа каясран тата вĕсене гитлерла палачсем вĕлерсе пĕтересрен хăтарăр! Нимĕç мерзавецĕсене вилĕм те тавăру!

Сывă пулччăр хăюллă партизансемсемпе партизанкăсем!

29. ССР Союзĕнчи граждăнсемпе гражданкăсене пурне те çар ĕçне вĕрентни пирĕн оборонăна тĕреклетет. Совет патриочĕсемпе патриоткисем! Çар ĕçне вĕренĕр! Тăван çĕршыва пултаруллăн хӳтĕлекенсем пулăр!

30. «Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшма хамăрăн пĕтĕм вăя парар! Халăхăн пĕтĕм вăйне тăшмана аркатса тăкнă çĕре парар!» (Сталин).

31. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшни эпир пĕтĕм Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнин çуррийĕ пулса тăрать. Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисемшĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшар!

32. Фронт валли хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса хатĕрлекен предприятисенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Винтовкăсем, автоматсем, пулеметсем, минометсем, орудисем, снарядсем туса кăларассине ӳстерĕр! Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ тума!

33. Танксем тăвакан заводсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хĕрлĕ Çара лайăх машинăсем ытларах туса парăр! Танксен пахалăхне лайăхлатса пырăр! Танксем мĕн чухлĕ нумайрах пулĕç—тăшмана çĕнтерес сехет çавăн чухлĕ çывăхрах пулĕ!

34. Авиаци завочĕсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хĕрлĕ Çар валли истребительсем, штурмовиксем, бомбардировщиксем ытларах туса парăр! Самолетсем мĕн чухлĕ нумайрах пулĕç, çĕнтерӳ çавăн чухлĕ çывăхрах пулĕ!

35. Нефть промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Нефть кăларассине ӳстерĕр! Фронтпа çĕршыв валли ытларах горючи парăр!

36. Çĕркăмрăк промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Транспорт тата фабрикăсемпе заводсем пĕр чарăнусăр ĕçлесси сирĕнтен килет. Кăмрăк кăларассине ӳстерĕр, фронтпа тыла кирлĕ чухлех топливо парса тăрăр!

37. Металлурги завочĕсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Танксем, самолетсем, орудисем, пулеметсем, снарядсем тума ытларах металл парса тăрăр!

38. Çăмăл тата пир-авăр промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хĕрлĕ Çар валли тумтирсем тата халăх валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине кунран-кун ӳстерсе пырăр!

39. Апат-çимĕç промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Фронтпа халăх валли апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларассине ӳстерĕр!

40. Чугунçул транспорчĕн работникĕсем! Япаласем турттарас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырăр! Чугунçулсем çинчи çарти пек дисциплинăна ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетĕр! Войскăсене, çар пурлăхĕсемпе халăх хуçалăхĕн грузĕсене турттаракан транспортсене хăвăрт çӳретессине организацилĕр!

41. Тинĕс транспорчĕпе юханшыв транспорчĕн работникĕсем! Флота, портсемпе пристаньсене пĕр чăрмавсăр тĕрĕс ĕçлеттерĕр! Фронтпа тыла грузсем хăвăртрах çитерсе парăр!

42. Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-сенчи совхозсенчи работницăсем! Колхозсенчи, совхозсенчи тата çĕрĕç органĕсенчи агрономсем! Çуракине организованно туса иртерер! Ялхуçалăхĕнчи пур культурăсене те пысăк тухăçлăхпа туса илер! Фронтпа çĕршыв валли ытларах апат-çимĕç, промышленность валли чĕртавар туса парар!

43. Колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, зоотехниксемпе ветеринарсем! Выльăх-чĕрлĕх хисепне татах ӳстерер, унăн продуктивноçне хăпартар, çĕршывпа Хĕрлĕ Çарăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене пĕтĕмĕшпех тивĕçтерер!

44. Трактористсем, комбайнерсем, ялхуçалăхĕнчи механизаторсем! Совхозсемпе МТС-сенчи тракторсемпе машинăсен паркĕн пĕтĕм вăйĕпе туллин усă курăр! Ялхуçалăхĕн мĕнпур культурисен тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешекенсен малти речĕсенче пулăр!

45. Совет интеллигенцийĕ! Совет учрежденийĕсенчи работниксем, инженерсем, учительсем, агрономсем, врачсем, наукăпа искусство тата литература работникĕсем! Хамăрăн пĕтĕм вăйпа пĕлĕве нимĕçсен фашистла пусмăрçисене хирĕç пыракан кĕрешĕве парар!

46. Совет хĕрарăмĕсем! Производствăри специальноçсене лайăх вĕренсе алла илĕр, ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ӳстерсе пырăр! Сывлăшран тапăнничен тата химиллĕ тапăнуран хӳтĕленес ĕçе, санитарипе çыхăну ĕçне вĕренĕр! Пĕтĕм вăя нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме парар!

47. Совет çамрăкĕсемпе, хĕрĕсем! Фронта пулăшас тĕлĕшпе вăя шеллемесĕр ĕçлĕр, производство техникине вĕренсе алла илĕр, ĕçри дисциплинăн чи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартăр, çар ĕçне ывăнма пĕлмесĕр вĕренĕр!

Сывă пулччăр совет çамрăкĕсем!

48. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем! Гитлерла вăрă-хурахсем аркатса хăварнă промышленноçпа ялхуçалăхне хăвăртрах юсаса ура çине тăратăр! Фабрикăсемпе заводсене ĕçе ярăр! Çуракине организованно туса иртерĕр!

49. Коммунистсемпе комсомолецсем! Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешекенсен малти речĕсенче пулăр!

50. Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Совет çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ!

51. Сывă пултăр пирĕн çĕршыври халăхсен никам аркатайми туслăхĕ!

52. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ—фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве хавхалантарса пыраканĕ тата организаторĕ!

53. Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе—малалла, нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкма тата вĕсене пирĕн Тăван çĕршывран хăваласа кăларма!

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Союзĕн халăх артисчĕ, Сталинла премий лауреачĕ В. И. Немирович-Данченко вилни çинчен пĕлтерни

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вырăс искусствин çав тери паллă деятелĕ, Мускаври художествăллă театра пуçарса яракансенчен пĕри, ССР Союзĕн Халăх артисчĕ, Сталинла премий лауреачĕ

Владимир Иванович НЕМИРОВИЧ-ДАНЧЕНКО

вилни çинчен хурланса пĕлтерессĕ.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

ССР Союзĕн халăх артисчĕ Владимир Иванович Немирович-Данченко ятне ĕмĕрлĕхе хăварасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Мускавра ССР Союзĕн Халăх артисчĕн Вл. И. Немирович—Данченкон памятникне лартас.

2. ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Комитетне Вл. И. Немирович-Данченкон литература тата режиссерла-тĕпчевлĕ статьисене пичетлесе кăларма хушас.

3. Мускаври Ленин орденлĕ тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ ССР Союзĕн М. Горький ячĕпе хисепленекен Художествăллă Академи театрĕнче ССР Союзĕн Халăх артисчĕ Вл. И. Немирович-Данченко ячĕпе шкул-студи уçас.

4. 1943—44 çулсем хушшинче Мускавра К. С. Станиславский тата Вл. И. Немирович-Данченко ячĕсемпе тăвакан Музыка театрĕн çуртне туса çитерес.

5. ССР Союзĕн Халăх артисчĕ Вл. И. Немирович-Данченко пурăннă хваттере унта МХАТ музейĕн филиалне тума ССР Союзĕн М. Горький ячĕпе хисепленекен Мускаври художествăллă Академи театрне парас.

---

1. ССР Союзĕн Халăх артисчĕ Вл. И. Немирович-Данченко ывăлне — Михаил Владимирович Немирович-Данченкона ĕмĕрлĕхе уйăхне 500 тенкĕ, ывăлĕн ывăлне Василий Михайлович Немирович-Данченкона вăл ӳссе çитиччен уйăхне 300 тенкĕ персональнăй пенсисем памалла тăвас.

2. ССР Союзĕн Халăх артисне Вл. И. Немирович-Данченкона пытарас тăкаксене государство çине илес.

Тырпулшăн кĕрешни—çĕршывшăн кĕрешни

Ӳкерчĕк çинче: Вăрнар районĕнчи «1-ое Мая» колхозри чи паллă стахановецсем (сулахайран сылтăмалла): малти ретре — А. В. Волковăпа И. Т. Пермякова юлташсем, иккĕмĕш ретре — М. Н. Николаевăпа Романов юлташсем.

Р. РОЙЗЕН фотоӳкерчĕкĕ.

5.632 гектар акнă

ЕЛЧĔК, апрелĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсен уйхирĕсенче хĕрӳ ĕç пырать. Çурхи тырăсене вăхăтра тата лайăх акса хăварассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ колхозниксемпе колхозницăсем. Ĕçре хĕрарăмсем те, ватă колхозниксем те, подростоксем те пысăк пултарулăх кăтартаççĕ.

Апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурĕ 3.744 гектар сухаланă, кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене пурĕ 2.457 гектар культиваци тунă. Сеялкăсемпе туллин усă курса тата алăпа акнине те шута илсен, паянхи куна район 5.632 гектар акнă. Вăл шутра тĕш тырăсем 5.384 гектар, пĕр çул хушши ӳсекен курăксем 185 гектар, кок-сагыз 40 гектар, пахча-çимĕçсем 6 гектар, тымар-çимĕçсем 17 гектар акнă. Кунсăр пуçне, кĕрхи тырăсем çине 464 гектар клевер акнă, 852 гектар çинчи кĕрхи тырă калчисем çине удобрени кăларнă, 146 гектар çинчи кĕрхи тырă калчисене сӳрелесе хăварнă.

Çураки ĕçĕсене хăвăрт аталантарса пыма колхозсене МТС бригадисем пысăк пулăшу параççĕ. Тракторсем кăçал иртнĕ çулхинчен те лайăхрах ĕçлеççĕ.

Çураки ĕçĕсенче малта пыракан колхозсене халех илсе кăтартмалла. Ворошилов ячĕпе тăракан, «КИМ», Крупская ячĕпе тăракан колхозсем малта пыраççĕ.

В. Макаров.

Çураки ĕçĕсене майăн 1-мĕшĕччен вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ, апрелĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи кун тĕлне район 1.510 гектар çĕре сухаласа çурхи тырăсем акма хатĕрлерĕ. Кĕрхи çĕртме тунă 145 гектара тепĕр хут сухаланă, кĕрхи çĕртме тунă 30 гектар çĕре культиваци туса хатĕрленĕ. Районри колхозсем пĕтĕмпе 1.088 гектар çине çурхи тырăсем акрĕç.

„Красный луч“ колхоз (председателĕ отечественнăй вăрçă инваличĕ Н. Софронов юлташ) çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра лайăх ĕçлерĕ. 26 хăмăт юсаса, 61 хăмăт çĕнĕрен туса хатĕрлерĕ. Çак ĕçре 73 çулхи П. Софронов колхозник лайăх ĕçлерĕ. Вăл пĕччен 15 хăмăт юсарĕ, 20 хăмăт çĕнĕрен турĕ.

Çураки вăхăтĕнче колхозри бригадăсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхозра иккĕмĕш бригада малтан юлса пыратчĕ, халĕ лайăх ĕçлесе колхозăн Хĕрлĕ ялавне илчĕ. Плана бригадă 125 процент таран тултарса пырать. Сӳре сӳрелекен И. Давыдов плана 150 процент тултарать. Унăн лашин пĕкки çинче вăл малта пынине кăтартакан хĕрлĕ флажок çакăнса тăрать.

Колхозри Хисеп хăми çинче кашни кунах колхозниксем мĕнле ĕçленине çырса кăтартаççĕ. Лайăх ĕçлекен стахановецсене колхоз столовойĕнче икĕ сĕтел уйăрса панă. Вĕсене стахановецсен сĕтелĕсем теççĕ.

Кăнтăрла колхозниксем уйрах апатланаççĕ. М. Макаровпа Е. Михалкова конюхсем лашасене валли хире выльăх апачĕ илсе тухса параççĕ. Лашасене кашни сехет çурăранах кăштах кантараççĕ.

Колхозра стена хаçачĕпе боевой листоксем тухса тăраççĕ, уйрăмăнах 3-мĕш бригадăра боевой листока лайăх кăлараççĕ. Унăн редакторĕ пулса комсомолка А. Миловидова ĕçлет.

Колхоз çураки ĕçĕсене майăн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлессишĕн кĕрешет.

П. Васильков.
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Пĕвесене юсарĕç

ИШЛЕЙ. Тивĕш ялсоветĕнчи «Автан» колхозри çамрăксем çураки ĕçĕсем пуçланиччен ялти пĕвесене юсаса тĕреклетме тăрăшрĕç. Вĕсем пулă ĕрчетмелли икĕ пĕвене юсарĕç. Ку пĕвесем, ял варринче пирки, çуллахи вăхăтра пушартан сыхланас тĕлĕшпе те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

И. Волков.

ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔПЕ СССР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ СОВЕТ СОЮЗĔН МАРШАЛНЕ С. М. БУДЕННĂЙ ЮЛТАША САЛАМЛАНИ

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире, Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен чи паллă организаторĕсенчен пĕрне тата Хĕрлĕ Çарăн çав тери чаплă полководецне, эсир 60 çул тултарнă кун хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн малашне те ăнăçлăн ĕçлеме сывлăх тата вăй-хал сунаççĕ.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне С. М. Буденнăй юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Совет Союзĕн Маршалĕ С. М. Буденнăй юлташ çуралнăранпа 60 çул тултарнине тата Совет Государстви умĕнче вăл çар тĕлĕшпе питĕ паха ĕçсем тунине палăртса, Семен Михайлович Буденнăй юлташа Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1943 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕ.

Ĕçĕн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ

Челноков юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводри рабочисем Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура вăйлăн çĕкленсе ĕçлеççĕ.

Март уйăхĕнчи ĕçшĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав илнĕ цех (начальникĕ Гольдман юлташ) уйрăмах тухăçлăн ĕçлет. Унти коммунистсем ăмăрту организаторĕсем пулса тăраççĕ. Ку цехра мастерскойсемпе уйрăм фронтовой бригадăсем Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Ермак юлташ начальник пулса ĕçлекен мастерскойра 12 фронтовой бригада ĕçлет. Вĕсене коммунистсемпе комсомолецсем ертсе пыраççĕ. Живулин, Федоров, Бадаев, Наумов комсомолецсем ертсе пыракан бригадăсем плана кунсерен 190—200 процент тултараççĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура вăрçă кунĕсенчи пархатарлă ĕçшĕн правительство наградисене илнĕ Федоровпа Быстров юлташсем стахановла ĕçĕн чи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Орденоносец **Н. Петров.**

Тăванла пулăшу

КАЛИНИНО. Çĕнъялти «Правда» колхоз колхозникĕсем заводсемпе предприятисенчи рабочисем валли ялхуçалăх продукчĕсем тăратас пирки куллен тăрăшаççĕ. Çак юлашки кунсенче кăна колхозниксем 12,40 центнер çĕрулми пухса станцине леçсе пачĕç.

Г. Матвеев.

Ярославль облаçĕнчи колхозниксен пуçарăвне ырласа

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Яманакри «Красное Сормово» колхозăн членĕсем Ярославль облаçĕнчи колхозниксен чĕнĕвне хавассăн кĕтсе илчĕç. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма колхоз 10 пуç сысна çури, 2 пăру уйăрчĕ. Оборона фондне хывма планран ирттерсе 10 гектар сĕлĕпе пăри акать, 0,5 гектар çĕрулми лартать.

И. Хатаевский.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Апрелӗн 25-мӗшӗнчи каçхи пелтерӳ

Апрелӗн 25-мӗшӗнче фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Хура тинӗсре пирӗн карапсем тӑшманӑн подводнӑй лодкине путарнӑ.

Иртнӗ эрнере, апрелӗн 18-мӗшӗпе 24-мӗшӗ хушшинче, сывлӑшри çапӑçусенче тата тӑшманӑн аэродромӗсенче нимӗçсен 381 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Çав вӑхӑт хушшинче пирӗн 134 самолет пӗтнӗ.

* * *

Апрелӗн 24-мӗшӗнче фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче пирӗн авиаци чаçӗсем нимӗçсен войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 30 автомашининчен кая мар пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен складне сирпӗнтернӗ, чугунçул составне аркатнӑ, 2 торпеднӑй катера тата тӑшманӑн 40 шлюпкине çити путарнӑ.

* * *

Кубань çинче пирӗн войскӑсем тӑшмана хирӗç артиллерирен тата пӑшалсемпе пулеметсенчен персе тӑнӑ. Пӗр чаçӑн боецӗсем гитлеровецсене пӗр участокра атакӑланӑ та хаяр çапӑçу хыççӑн хӑйсен позицийӗсене пӑртак лайӑхлатнӑ. Пирӗн сывлӑшри вӑйсем тӑшман аэродромӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ. Самолет экипажӗсем бомбӑсем нимӗç самолечӗсене тӳрремӗнех лекнине, аэродром çинче пушарсемпе взрывсем пулнине курнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче нимӗçсен 18 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗнче пирӗн чаçсем хӑйсем йышӑнса тӑракан позицисем çинче оборонӑллӑ ӗçсем туса тӑнӑ. Пӗр чаçри разведчиксен отрячӗ тӑшман тӑракан вырӑна кӗрсе кайса 3 дзота тата 2 блиндажа сирпӗнтернӗ. Разведчиксем 40 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, унтан тыткӑна илсе, 3 пулеметпа пӗр миномет тытса илсе хӑйсен чаçне таврӑннӑ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хӗвеланӑçнерехре пирӗн чаçсем тӑшман çине персе тӑнӑ. Совет артиллерисчӗсемпе минометчикӗсем тӑшманӑн 11 дзочӗпе блиндажне аркатса тӑкнӑ, артиллерин 2 батарейине тата минометсен 3 батарейине пусӑрнӑ. Пӗр участокра гитлеровецсен батальонӗ пирӗн пӗр подразделенин боевой хуралне атакӑласа пӑртак хӗстернӗ. Пирӗн боецсем хирӗç пырса çапса тӑшмана ывӑтса янӑ та малтанхи вырӑнсене йышӑнса илнӗ. Çапӑçу хирӗнче нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсен 100 ытла вилли выртса юлнӑ.

* * *

Витебск облаçӗнчи партизансен темиçе отрячӗ апрелӗн 12-мӗшӗпе 15-мӗшӗ хушшинче нимӗçсен 3 гарнизонне пӗтерсе тӑкнӑ, нумай трофейӑсем тытса илнӗ. Çав вӑхӑт хушшинчех партизансем тӑшманӑн 4 çар эшелонне сирпӗнтернӗ тата 5 чугунçул кӗперне аркатнӑ. Витебск партизанӗсен тепӗр отрячӗ карательнӑй экспедицийӗсене хирӗç нумай кунсем хушши пынӑ çапӑçусенче гитлеровецсен 2 ротине пӗтерсе тӑкнӑ. Çакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 2 оруди, миномет, 12 пулемет, 86 винтовка тата 18.000 патрон. Совет патриочӗсем тӑшманӑн пӗр аэродромӗ çинче бензохранилищӗне сирпӗнтернӗ тата нимӗçсен 5 самолетне вут тӗртнӗ.

* * *

Гитлерла суеçӗ Геббельс „Дас Рейх" хаçатра „сывлӑшри вӑрçӑ тивнӗ облаçсем" ятлӑ статья пичетлесе кӑларнӑ. Çав статьяра вӑл бомбӑсем пӗрмаях пӑрахакан хуласенчи нимӗçсен шухӑш-кӑмӑлӗсем лайӑх пулнипе мухтанма шутланӑ. Яланхи пекех, Геббельс унта та суйнӑ. Германирен килекен çырусем Геббельс каппайланнине пӗтӗмпех пӑрахӑçа кӑлараççӗ. Макс Пильграм обер-ефрейтор патне унӑн ашшӗ-амӑшӗсем çапла çыраççӗ: „Сывлӑшран килсе тапӑннипе эпир питӗ аптӑратпӑр. Пирӗн хулара томмисем мӗн туса хунине эсӗ курасчӗ. Эпир мӗн тӳссе ирттерни çинчен ан та ыйт. Хамӑра çаварса илнӗ пекех, эпир нӳхрепре ларатпӑр". Ганс Гаштеер патне Берлинран аппӑшӗ çапла çырать: „Мартӑн 1-мӗшӗнче пире сывлӑшран тапӑнчӗç. Кунта мӗн пулнине эсӗ шухӑшласа илес те çук. Хӑçан та пулин пире канӑç парӗç-ши вӗсем? Трамвайпа Вильмерсдорфа кайнӑ чухне пӑхатӑн та çав тери тискер аркатусене курса, Сталинградра пынӑ пекех туйӑнать". Ганс Кольс салтак патне Генри Шют Гамбургран çапла çырать: „Тревога çинчен пӗлтерсенех, тамӑка лекнӗ пекех пулчӗ. Тӗнче пӗтнӗ чухнехи пек, пур çӗрте те взрывсем. Пушарсем кӗрленипе пӗлӗт хӗп-хӗрлех. Çакӑ вӗçленӳ мар-ши вӑл?.. Пирӗн вӑйсем часах пӗтсе çитӗç".

Фронтра вӗлернӗ нимӗç салтакӗсем çумӗнче тупнӑ çакӑн пек çырусене çӗршер те пиншер кӑтартма пулать. Тӗрӗслӗхе пытарса, Геббельс çав тери ухмахла суять. Анчах тӗрӗслӗхе пытараймӑн.

Апрелӗн 26-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Апрелӗн 26-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗнче пӗр чаçӑн подразделенийӗ çапӑçса разведка тунӑ. Пирӗн боецсем тӑшман окопне кӗрсе кайнӑ та штык вӗççӗн пынӑ çапаçура нимӗçсен 70 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Тӑшманӑн пӗр орудине, 4 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, пӗр дзочӗпе 5 блиндажне сирпӗнтернӗ.

* * *

Балаклейӑран кӑнтӑртарахра пӗр чаçӑн боецӗсем нимӗç пехотин атакине сирсе пӑрахнӑ. Çапӑçу хирӗнче гитлеровецсен 100 виллине çити выртса юлнӑ. Пирӗн артиллери тӑшманӑн обозне саланласа янӑ. Боеприпассем тиенӗ 12 лава пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Белгород районӗнче пӗр чаçӑн артиллерисчӗсем, уçӑ позицисенчен персе тӑрса, нимӗçсен 6 дзочӗпе блиндажне аркатса тӑкнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтернӗ тата миномет батарейине, артиллерин 3 батарейине пусарнӑ. Тепӗр участокра тӑшман пирӗн тӗреклетнӗ вырӑнсене разведка тума хӑтланнине сирсе пӑрахнӑ. Пӑшалсемпе пулеметсенчен персе, нимӗç пехотин пӗр ротине çити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Çурçер-Хӗвеланӑç фронтӗнче пӗр чаçри разведчиксен отрячӗ çӗрле тӑшман тылне кӗрсе кайнӑ. Пирӗн боецсем нимӗçсен 36 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, апат-çимӗç складне тата грузсем турттарса пыракан 5 автомашинӑна çунтарса янӑ. Темиçе çынна тыткӑна илсе, разведчиксем хӑйсен чаçне таврӑннӑ.

* * *

Аялархра Смоленск облаçӗнчи партизансен пӗр отрячӗн командирӗ кӗскен çырса пынисене пичетлетпӗр:

„**Апрелӗн 9-мӗшӗ.** Çӗрле отрядри подрывниксен групти чугунçул çине минӑсем лартса тухнӑ. Ирпеле минӑсем çине тӑшман поезчӗ пырса кӗнӗ. Крушени пулнипе паровоз тата 11 платформа арканса кайнӑ. Поезда хураллакан 19 нимӗç салтакне пӗтерсе тӑкнӑ.

Апрелӗн 10-мӗшӗ. Чугунçул станци районӗнче çӗрле вӑйлӑ пушар тухнине сӑнарӑмӑр. Ирпеле пирӗн подрывниксем горючи турттарса пыракан состава ишӗлтерсе яни çинчен пӗлтерчӗç. Бензин тултарнӑ 13 цистерна çунса кайнӑ.

Апрелӗн 13-мӗшӗ. Чугунçула юсас тӗлӗшпе нимӗçсем ӗçлени ахалех пулчӗ. Гитлеровецсем 7 сехет хушши чугунçула тасатса юсарӗç. Партизансен групти çав вырӑнтан 5 километр аяккарах кайса минӑсем çӗнӗрен лартса тухнӑ. Шоссе çинче нимӗç автомашинисене пенӗ. Нимӗçсем чарӑннӑ та партизансене хӑвалама пуçланӑ. Вӑрманта пуçланса кайнӑ çапӑçура 16 гитлеровеца вӗлернӗ тата 20 çынна ытла амантнӑ".

* * *

Нимӗçсен фашистла çын вӗлерекенӗсем Минск облаçӗнчи Сыч ялӗнчи халӑха тискеррӗн асаплантарса пӗтернӗ. Гитлеровецсем яла пӗтӗмпех çаратса, аркатса тухнӑ. Фашистла палачсем çав ялти 52 çынна вӗлернӗ е çунтарса янӑ. Вӗсем хушшинче 12 хӗрарӑм тата 16 ача пулнӑ.

СССР халӑхӗсен туслӑхӗ— пирӗн çӗнтерӳсен никӗсӗ

Гитлерла Германи Совет Союзӗ çине вӑрçӑпа ултавлӑн килсе тапӑннӑранпа çирӗм икӗ уйӑх иртрӗ. Çак вӑхӑтра пирӗн çӗршыв, совет стройӗ, пирӗн халӑх хуçалӑхӗ, пирӗн хӗçпӑшаллӑ вӑйсем, культура пуренчен те тӗрӗсленчӗç. Пирӗн çӗршыв çав тӗрӗслеве калама çук çирӗп тӳссе ирттерчӗ. СССР халӑхӗсен туслӑхӗ те çав тӗрӗслеве калама çук аван тӳссе ирттерчӗ.

Хамӑрӑн тӑван çӗршыва сыхлама пӗтӗм совет халӑхӗ çӗкленчӗ. Пӗтӗм халӑх, пӗр çын пек пулса, хӑйӗн çулпуçӗ тата полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, хӑйӗн чи хаяр та юнлӑ тӑшманне — гитлерла Германипе унӑн вассалӗсене хирӗç паттӑрла кӗрешет. Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-Çар Флочӗ, хамӑрӑн нумай нациллӗ тӑван çӗршыва хӳтӗлесе, хӗрӳллӗ те хаяр çапӑçусенче тӑшманӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине пӗтерсе пыраççӗ, тӑшмана вӑйлӑн пыра-пыра çапаççӗ.

Гитлеровецсем, «çиçӗм пек вӑрçӑ» хатӗрлесе, Совет Союзне темиçе эрне хушшинчех пӗтерсе тӑкма шутланӑ. Вӗсем «совет стройӗ çирӗп мар пуласси, совет тылӗ çирӗп мар пуласси çине шаннӑ, пӗрре вӑйлӑ пырса çапнӑ хыççӑнах, Хӗрлӗ Çарӑн малтанхи ӑнӑççӑрлӑхӗсем хыççӑнах рабочисемпе хресченсем хушшинче хирӗçӳсем пуçланса кайӗç, ССР Союзӗнчи халӑхсем хушшинче харкашу пуçланӗ, восстанисем тапранса кайӗç, çӗршыв вара уйрӑм пайсем çине уйӑрӑлса кайӗ тесе шутланӑ, çакӑ вара нимӗç захватчикӗсене Урал патнех çитме çӑмӑллатмалла пулнӑ». (Сталин).

Анчах та отечественнӑй аслӑ вӑрçӑн мӗнпур опычӗ гитлерла ухмахсен планӗ нихçан та пурнӑçланма пултарайманнине кӑтартса пачӗ. Вӑрçӑ опычӗ çакна кӑтартса пачӗ: нумай нациллӗ совет государствине темӗнле пысӑк йывӑрлӑхсене тӳсме тиврӗ пулин те, вӑл хӑйӗн территорин пысӑк пайне вӑхӑтлӑха çухатрӗ пулин те, вӑл гитлерла вӑрçӑ машинипе пырса çапнипе арканса каймарӗ кӑна мар, пачах урӑхла, вӑл хальхи пек нихçан та çирӗп пулман. «Хӗрлӗ çарӑн ӑнӑççӑрлӑхӗсем рабочисемпе хресченсен союзне, çавнашкалах тата ССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхне вӑйсӑрлатмарӗç кӑна мар, пачах урӑхла, ӑна татах та вӑйлӑн çирӗплетрӗç. Унтан та ытларах, — вӗсем ССР Союзӗнчи халӑхсен çемьине никам çӗнтерейми пӗрлӗхлӗ лагерь туса хучӗç, вӑл лагерь хӑйӗн Хӗрлӗ Çарне, хӑйӗн Хӗрлӗ Флотне пӗтӗм вӑйран пулӑшса тӑрать. Совет тылӗ нихçан та хальхи пек çирӗп пулман. Кирек хӑш ытти государство та, хӑйӗн территорине пирӗн чухлӗ çухатнӑ пулсан, йывӑрлӑха тӳсеймесӗр пӗтсе ларнӑ пулӗччӗ,—çакӑ вӑл питех те пулма пултарнӑ. Совет стройӗ йывӑрлӑха çавӑн пек çӑмӑллӑн тӳссе ирттерчӗ пулсан, хӑйӗн тылне татах та çирӗплетрӗ пулсан, çакӑ вӑл совет стройӗ халӗ нихçанхинчен те ытларах çирӗп пулнине пӗлтерет» (Сталин).

Советсен нумай нациллӗ çурчӗн никӗсӗ çав тери çирӗп пулни, чи малтан, совет халӑхӗсен аслӑ туслӑхӗнчен, çав туслӑх совет стройӗн вӑй-хăвачӗн тата унӑн тӗрекӗн вӑйлӑ çӑлкуçӗ пулса тӑнинчен килет. Халӑхсен туслӑхӗ Совет государствин чи паллӑ никӗсӗсенчен пӗри пулса тӑрать. Çав туслӑх царизма хирӗç халӑхсем пӗр-пӗринпе пӗрлешнӗ тапхӑртанах пуçланса кайнӑ, Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци кунӗсенче аталаннӑ, граждан вӑрçи вӑхӑтӗнче тата ютçӗршыв интервенцийӗпе кӗрешнӗ çулсенче çирӗпленнӗ туслӑх социализм строительствин мирлӗ çулӗсенче тата ытларах çирӗпленнӗ.

Çапла, совет халӑхӗсен туслӑхӗ çирӗпленсе, никам çӗнтерейми вӑй пулса тӑнӑ. Большевиксен партийӗ пирӗн Совет государстви аталанса пынӑ пур тапхӑрсенче те яланах çӗршыври мӗнпур национальноçсен государствине, вӗсен хуçалӑхӗпе культурине аталантарса пынӑ.

Совет халӑхӗн туслӑхӗ вӑл—ленинла-сталинла наци политикине пурнӑça кӗртсе пынин чаплӑ результачӗ пулса тӑрать. Çав политика—пӗртен пӗр тӗрӗс те принципиальнӑй политика. Ана пурнӑça кӗртсе пыни советӑн пур халӑхӗсене те пуян пурӑнакан турӗ, вӗсен культурӑпа политика тӗлӗшӗнчи пӗлӗвӗсене çав тери çӳлӗ пусӑма çӗклерӗ, вӗсем пӗр союзлӑ государство системинче туслӑ пурӑнассине татах та çирӗплетрӗ.

Совет халӑхӗсем пӗр хутчен кӑна мар алла хӗçпӑшал тытса хӑйсем Октябрьти социализмлӑ революцире çӗнтерсе илнисене сыхлама çӗкленнӗ. Совет государствин малтанхи çулӗсенчех пирӗн халӑхсен ютçӗршыв интервенчӗсемпе тата белогвардеецсемпе вирлӗн çапӑçмалла пулчӗ. Ун чухне совет халӑхӗсем пурте хӑйсен çамрӑк государствине сыхлама ура çине тӑчӗç. Вӗсем хӑйсен пӗтӗм вӑйне аслӑ вырӑс халӑхӗпе пӗрлештерчӗç, вара, вырӑс халӑх пуçра тӑрса кӗрешнипе, ютçӗршыв интервенчӗсене хамӑрӑн Тӑван çӗршывран кӑларса ывӑтрӗç, хӑйсен ирӗклӗхне тата наци тӗлӗшӗнчен никама пӑхӑнманлӑхне сыхласа хӑварчӗç. Чӑваш халӑхӗ ытти халӑхсемпе пӗрле çав хаяр кунсенче хӑйӗн пӗтӗм вӑйне совет влаçне сыхласа хӑварнӑ çӗре пачӗ.

Халӗ те, гитлерла захватчиксене хирӗç кӗрешнӗ вӑхӑтра, пӗтӗм совет халӑхӗсем—вырӑссем, украинецсем, белоруссем, грузинсем, армянсем, тутарсем, чӑвашсем—пурте пӗр харӑс тӑрса тӑшманпа кӗрешеççӗ, халӗ каллех кӗрешӳре вырӑс халӑхӗ пуçра пырать. Нимӗç захватчикӗсене хирӗç туса пыракан отечественнӑй вӑрçӑ кунӗсенче совет халӑхӗсен аслӑ туслӑхӗ татах та ытларах çирӗпленчӗ. Вӑрçа пула тӳссе ирттернӗ йывӑрлӑхсем ССР Союзӗнчи халӑхсен çемьине никам çӗнтерейми пӗрлӗхлӗ лагерь туса хучӗç, вӑл лагерь хӑйӗн Хӗрлӗ Çарне, хӑйӗн Хӗрлӗ Флотне пӗтӗм вӑйран пулӑшса тӑрать.

Юлашки вӑхӑтра совет хресченӗсен патриотизмӗ, уйрӑмах Тамбов тата Саратов облаçӗнчи колхозниксем пуçарса янӑ хыççӑн, çав тери анлӑн сарӑлса кайрӗ. Паллӑ совет патриочӗ Ферапонт Петрович Головатый пек Хӗрлӗ Çар фондне çӗршер пин тенкӗ укçа панӑ колхозниксем темиçешер пин шутланаççӗ. Пирӗн Чӑваш республикинче те халӑхӑн укçи-тенкипе танксемпе самолетсем тума çӗршер пин тенкӗ укçа панӑ колхозниксем сахал мар. Пӗтӗм республикипе танксен колоннисене тата самолетсен эскадрильине тума 70 миллион тенкӗ ытла пухнӑ. Вӑл çеç те мар, колхозниксем хӑйсенчен ытлашши темиçе пин пӑт тӗштырра, темиçе çӗр пӑт аш-какай Хӗрлӗ Çар фондне пачӗç. Хӗрлӗ Çар воинӗсем валли вуншар вагон кучченеçсем пухса ячӗç. Предприятисенчи рабочисем ырми-канми ӗçлесе фронта пулӑшса тӑраççӗ.

Отечественнӑй вӑрçӑн тӗллевне совет халӑхӗ питӗ лайӑх пӗлсе тӑрать. Совет халӑхӗсен нумай нациллӗ çемьи нимӗç фашизмӗ пирӗн çӗршыва мӗн илсе килнине питӗ лайӑх пӗлсе тӑрать. ССР Союзӗнчи халӑхсем гитлеровецсем совет влаçне, пирӗн нумай нациллӗ Совет государствине пӗтерсе тӑкма шутланине, пирӗн çӗршывра каллех царизм, помещиксемпе капиталистсен влаçне туса хума шутланине аван пӗлеççӗ. Вӗсем нимӗçсем нациллӗ культурӑна тата совет халӑхӗсен нациллӗ-государствӑллӑ ирӗклӗхне ишӗлтерме шутланине пӗлеççӗ. Нимӗçсем пирӗн халӑхсене нимӗçлетесшӗн, пирӗнтен нимӗç князӗсемпе баронӗсен чурисем туса хурасшӑн. Çапла вара, «ӗç Совет государствин пурнӑçӗпе вилӗмӗ çинчен, ССР Союзӗнчи халӑхсен пурнӑçӗпе вилӗмӗ çинчен, Совет Союзӗнчи халӑхсем ирӗклӗн пурӑнасси е вӗсем чурулӑха кӗрсе ӳкесси çинчен пырать» (Сталин).

Çавӑнпа та ӗнтӗ пирӗн совет халӑхӗсем пурте пӗрле—вырӑспа грузин, украинецпа белорусс, таджикпа узбек, тутарпа чӑваш тата ытти те хамӑрӑн чыслӑхпа ирӗклӗхе хӳтӗлесе, хӑварассишӗн çума-çумӑн тӑрса кӗрешеççӗ.

Тӑван çӗршыва нимӗç захватчикӗсенчен хӳтӗлесе хӑварас шухӑш-кӑмӑл социализмлӑ çӗршывӑн хастарлӑ çар çыннисене чаплӑ çӗнтерӳсем тума ертсе пырать. Чӑваш çӗршывӗн ывӑлӗсем нимӗçсен ирсӗр захватчикӗсемпе отечественнӑй вӑрçӑн пур фрончӗсенче те çапӑçаççӗ, вӗсем ытти халӑхсен ывӑлӗсем пекех, пур çӗрте те хӑйсен паттӑрлӑхне кӑтартаççӗ.

Чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем пӗрре кӑна мар вырӑс халӑхӗ ертсе пынипе хӑйсен тӑван çӗршывне сыхлама тӑнӑ, хӑйсен паттӑрлӑхне кӑтартнӑ. 1812 çулти отечественнӑй вӑрçӑра темиçе чӑваш çынни паттӑра тухнӑ. Чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем граждан вӑрçинче те хӑйсен паттӑрлӑхне лайӑх кӑтартнӑ. Анчах та халӑхӑн героизмӗ хальхи отечественнӑй вӑрçӑра палӑрнӑ пек нихçан та çав тери уççӑн палӑрман. Чӑваш халӑхӗн пиллӗк ывӑлӗ: Мирон Ефимович Ефимов,—Элӗк районӗнчи Самушкӗн Сурӑмран, Федот Никитич Орлов—Советски районри Кӗçӗн Ямаш ялӗнчен, Борис Михайлович Васильев—Советски районри Çӗмӗрт лӗх Чемей ялӗнчен, Геннадий Габайдулович Габайдулин — Комсомольски районри Тукай ялӗнчен, майор-чӑваш Лаптев юлташ—Совет Союзӗн Геройӗсем пулма тивӗç илчӗç. Чӑвашсенчен 1475 çынна Правительство орденсемпе медальсем парса наградӑланӑ. Чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем, ытти пур халӑхсен ывӑлӗсем пекех, совет çӗршывне сыхланӑ çӗрте ӑста çапӑçаççӗ, харсӑрлӑхӑн тата паттӑрлӑхӑн тӗслӗхӗсене, хӑйсем Тӑван çӗршыва вӗçӗмсӗр парӑннине уççӑн кӑтартаççӗ.

Пирӗн земляксем—Совет Союзӗн Геройӗсем — Винокуров, Ефимов, Орлов, Васильев, Габайдулин, Лаптев юлташсем—нимӗç захватчикӗсене хирӗç паттӑрла çапӑçаççӗ. Вӗсем кашнийӗ темиçе çӗршер нимӗç оккупантне, вӗсен çар техникине калама çук нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Вӗсемшӗн хаяр çилтӑвӑл та, çӑмӑрлӑ, юрлӑ çанталӑк та нимӗн те мар—вӗсем хуть хӑш вӑхӑтра та тӑшмана çӗмӗрсе пыраççӗ. Совет Союзӗн Геройӗ Габайдулин юлташ пӗр çапӑçурах хӑй пӗччен фашистсен 40 салтакӗпе пӗр офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Орденоносец Дмитрий Капитов пӗр çапӑçура хӑй пӗччен 11 нимӗçе тыткӑна илнӗ. Чаплӑ снайпер Радион Давыдов 1942-мӗш çулта 365 нимӗçе «леш тӗнчене» ӑсатнӑ. Иван Банбурин пӗр çапӑçура хӑй пӗччен нимӗçсен 20 салтакне тата пӗр офицерне вӗлернӗ.

Акӑ камсенчен вӗренмелле пирӗн тӑшмана çӗнтерме! Акӑ камсем пек хӳтӗлемелле пирӗн хамӑрӑн юратнӑ Тӑван çӗршыва! Мухтав геройсене! Мухтав çавӑн пек паттӑр ачасене пӑхса ӳстернӗ ашшӗ-амӑшӗсене! Мухтав çавӑн пек маттурсене вӗрентсе ӳстернӗ Тӑван çӗршыва!

Совет государстви вӑрçӑ вӑхӑтӗнче чылай пысӑк йывӑрлӑхсене тӳссе ирттерсе тата ытларах çирӗпленчӗ. 1942 çул вӗçӗнче Хӗрлӗ Çар çапӑçури пуçарулӑха хӑй аллине илсе наступлени пуçарса ячӗ. Пирӗн войскӑсем тӑшман полкӗсемпе дивизийӗсене çӗмӗреççӗ, вӗсен чӗрӗ вӑйӗпе техникине калама çук нумай пӗтерсе пыраççӗ, хамӑрӑн ялсемпе хуласене фашистла ирсӗрсенчен тасатаççӗ.

Мӗнпур çӗршывсенчи халӑхсем хушшинчи мирпе туслӑха хӳтӗлекен Хӗрлӗ Çар пирӗн çӗршыври халӑхсен правине геройла хӳтӗлет. «Эпир Совет Украинине нимӗç пусмӑрӗнчен ирӗке кӑлармасӑр тытӑнтӑмӑр, анчах миллионшар украинецсем халӗ те нимӗç захватчикӗсен пусмӑрӗ айӗнче асапланаççӗ-ха. Белоруссире, Литвара, Латвире, Эстонире, Молдавире, Крымра, Карелире халлӗхе нимӗç оккупанчӗсемпе вӗсен тарçисем хуçаланаççӗ-ха». (Сталин). Тӑшман çарӗсене хӑватлӑн пыра-пыра çапнӑ ӗнтӗ, анчах ӑна пӗтӗмӗшпех çӗнтерсе тӑкман-ха. Пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Çарӑн тискер те хаяр, халлӗхе вӑйлӑ тӑшмана хирӗç малашне те хӗрӳллӗн кӗрешмелле пулать.

ССР Союзӗн хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен Верховный Главнокомандующийӗн, Совет Союз Маршалӗн Сталин юлташӑн приказне пурнӑçлакан мухтавлӑ Хӗрлӗ Çара хамӑрӑн пӗтӗм вӑйпа пулӑшса тӑрар, тӑшмана çӗмӗрсе тӑкас ӗç валли мӗнпур майсене мобилизацилер! Хӗрлӗ Çара пулӑшни—халӗ нимӗç пусмӑрӗ айӗнче асапланакан украинецсене, белоруссене, литовецсене, латышсене, эстонецсене, молдавансене, Крым, Карели халӑхӗсене хӑвӑртрах ирӗке кӑларма пулӑшни пулать.

М. АНДРЕЕВ.

Тимӗр-тӑмӑр пухас ӗçе вӑйлатмалла

ВЛКСМ Центральный Комитечӗпе Наркомчермет комсомол организацийӗсен тимӗр-тӑмӑр пухас, ӑна металлурги завочӗсене тиесе ӑсатас тӗлӗшпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 çулхи 1-мӗш кварталти итогӗсене тунӑ. Вӗсем Чӑваш республикинчи комсомол организацийӗсем ку тӗлӗшпе çителӗксӗр ӗçленине палӑртнӑ.

Республикӑри комсомол организацийӗсем тата тимӗр-тӑмӑр пухас тӗлӗшпе ӗçлекен организацисем 1-мӗш кварталта тимӗр-тӑмӑр пухса металлурги завочӗсене тиесе ӑсатмалли плана 31,3 процент çеç тултарнӑ. Республикӑри пысӑк предприятисем — Канашри вагонсем юсакан завод 1.650 тонна пухас вырӑнне 630 тонна, Бунин юлташ директор заместителӗ пулса ӗçлекен завод 100 тонна вырӑнне 23 тонна çеç пухнӑ. Комсомолӑн Канашри вагонсем юсакан заводри комитечӗ (секретарӗ Коваленко юлташ) ку ӗçе тивӗçлипе организацилемен. Шупашкар хулинчи комсомолецсем те (ВЛКСМ Горкомӗн секретарӗ Охандерова юлташ) плана çурри чухлӗ те пурнӑçлайман.

Тимӗр-тӑмӑр пухас ӗçе Промкооперации 3,1 процент, Чӑвашпотребсоюз — 3,6 процент çеç пурнӑçланӑ, «Союзутиль» — 450 тонна вырӑнне 131 тонна çеç пухнӑ.

Тимӗр-тӑмӑр пухас ӗçри çитменлӗхсене пӗтерсе, ку ӗçе хӑвӑртлатмалла.

Агитбригадӑсем уйра ӗçлекенсем патӗнче

ОКТЯБРЬСКОЕ, апрелӗн 24-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Çурхи уйхир ӗçӗсем вӑхӑтӗнче колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче агитациллӗ-массӑллӑ ӗçе лайӑхрах туса пырас тесе, ВКП(б) тата ВЛКСМ райкомӗсем райцентрти партипе комсомол активӗнчен икӗ агитбригада организацилерӗç. Вӗсем колхозсен уйхирӗсене тухса кайрӗç.

Паянхи кун тӗлне агитбригадӑсем 4 колхозра пулнӑ. Вӗсем унта тӗнчери лару-тӑрупа хальхи тапхӑр çинчен доклад тунӑ тата пьеса лартса панӑ. Агитбригадӑсенче 10 комсомолец. Вӗсен ӗçне комсомолец-активист Кузьмин юлташ ертсе пырать.

В. Любимов.

Ют çӗршывсенче

АМЕРИКАНЕЦСЕН ФИНЛЯНДИРИ МИССИЙӖ СТОКГОЛЬМА ТУХСА КАЙНӐ

ЛОНДОН, апрелӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑн дипломатиллӗ миссийӗн штачӗ Финляндирен Стокгольма тухса кайнӑ. Государственнӑй департамент представителӗ каланӑ тӑрӑх, çакӑ вӑл „административнӑй мера" пулса тӑрать.

Анчах та государственнӑй департамент представителӗ Америка миссийӗ тухса кайни Америкӑпа Финлянди хушшинчи çыхӑнусенчен килме пултарни çинчен каласшӑн пулман.

ЛОНДОН, апрелӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, уйрӑм поездпа паян Стокгольма Америкӑн Хельсинкири дипломатиллӗ миссийӗн пур членӗсем те пырса çитнӗ.

СОВЕТ СОЮЗӖПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ ФРОНТРА ÇАПӐÇАКАН ЧЕХОСЛОВАКСЕН ÇАР ЧАÇНЕ США-ри ЧЕХОСЛОВАКИ ПИЧЕЧӖ САЛАМЛАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, апрелӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). США-ра тухса тӑракан чехословаксен хаçачӗсем Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтра нимӗçсене хирӗç чехословаксен çар чаçӗ кӗрешни çинчен Совет Союзӗнчен пыракан пӗлтерӳсене пичетлесе кӑлараççӗ. Чехословакин çар чаçӗсем халӗ хӑйсен боевой пахалӑхне кӑтартма пултарни çинчен хаçатсем тулли кӑмӑлпа çыраççӗ. „Нью-Йорк листисем" хаçат çапла çырать: Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче чехсем çар операцийӗсене хутшӑнни çинчен пӗлтерни Чехословакин нимӗçсем чураланӑ халӑхӗн кӑмӑлне çӗклет тет. „Чехословаки чаçӗпе çапӑçса Германи тӳснӗ çухатусем,— çырать хаçат,—„Чехословаки халӑхне нимӗçсем тискеррӗн асаплантарнишӗн пирвайхи хут тавӑрни пулать. Часах çӗнӗрен пырса çапӑпӑр. Совет Союзӗпе Хӗрлӗ Çар умӗнче парӑмлӑ пулнине пирӗн манма юрамасть", тет.

ЧЕРЧИЛЛЬ АРНОЛЬД ГЕНЕРАЛ ПАТНЕ ЯНӐ ТЕЛЕГРАММА

ЛОНДОН, апрелӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Америка армийӗн сывлӑшри вӑйӗсен командующийӗ Арнольд генерал патне Черчилль çакӑн пек телеграмма янӑ:

„Сирӗн летчиксене японецсем пӗр шеллемесӗр вӗлерни çинчен эпӗ çав тери тарӑхса вуларӑм. Çак варварла ӗç йӗркерен тухакан ӗç японецсем хӑйсен территорийӗнчи çар предприятийӗсем çине тата ытти çар об"екчӗсем çине бомбӑсем пӑрахассинчен мӗн тери хӑранине питӗ уççӑн кӑтартса парать. Король авиацийӗ хӑйӗн Америкӑри юлташӗсемпе пӗрле Токио çине тата Японин ытти хулисем çине бомбӑсем пӑрахса, çав тискер те çӑткӑн нацин цивилизациллӗ тӗнчене аркатмалли вӑйне пӗтерес куна кӗтни çинчен шантарса калатӑп. Çав задачӑна пурнӑçлас ӗçе пирӗн летчиксем хастарлӑн хутшӑнӗç тесе эпӗ ӗмӗтленсе тӑратӑп. Вӑл задачӑна пурнӑça кӗртме мӗн чухлӗ вӑхӑт кирлине пӑхмасӑрах, пирӗн халӑхсен пӗрлешнӗ вӑйӗсем ӑна тӗплӗн хатӗрленсе пурнӑçламаллах".

АНГЛИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ СЫВЛӐШРИ ВӐРÇӐ

ЛОНДОН, апрелӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пӗлтерет: апрелӗн 24-мӗшӗнче „Москито" йышши бомбардировщиксем Хӗвеланӑç Германири чугунçул мастерскойӗсемпе промышленность объекчӗсене атакӑланӑ. Англи самолечӗсем çухатусем туман.

Апрелӗн 25-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле тӑшман авиацийӗ Англин хӗвелтухӑç çыранӗ тӗлӗнче пысӑках мар активлӑх кӑтартнӑ. Тӑшманӑн пӗрерӗн-пӗрерӗн вӗçекен темиçе самолечӗ пысӑках мар сиен тунӑ. Жертвӑсем çук.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбиначӗ лартмашкӑн улмуççи, хурлӑхан тата хӑмлаçырли йывӑççисем кирек мӗн чухлӗ сутать.

Шупашкарта тата районсенче ӗçлеме çакӑн пек работниксем кирлӗ: Контора заведующийӗ, база заведующийӗ, старши бухгалтерсем, бухгалтерсем, счетовод-кассир, машинистка, десятник, кладовщиксем, склад заведующийӗ, сторожсем, Шупашкарпа Канаш хушшинчи тракт çине контролерсем. Çак адреспа ыйтса пӗлмелле: Шупашкар, Союзная урамӗ, 4-мӗш номерлӗ çурт. 2-мӗш хут, Автоуправлени.

Завхоз тата уборщица васкавлӑн кирлӗ. Столовӑй пур. Условисем килӗшнӗ тӑрӑх. Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамӗ, 11. Центроэлектромонтажӑн 6-мӗш номерлӗ уйрӑм участокӗ.

Ялан ӗçлеме старши бухгалтер кирлӗ. Хваттер параççӗ. Çак адреспа ыйтса пӗлмелле: Шупашкар, Учительская урамӗ, 39. Чӑваш республикин Заготживконтори.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0—67, редакци секретарӗн—4—26, промышленность пайӗн—3—99, ялхуçалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1321 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.